23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 21 ВЫРСАРНИКУН 143(6078) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн В. М. Молотов юлташăн доклачĕ тăрăх туха каланисем

А. С. ЩЕРБАКОВ депутатăн сăмахĕ

(МУСКАВ)

Депутат юлташсем! Гитлерла Германия нимĕçпен çĕртен тата ултавлăн пирĕн çĕршыв çине килсе тапăннă кунранпа часах пĕр çулталăк тулать. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне халăхĕсене, пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕх юратакан халăхсене парăнтарас тĕллевпе гитлеризм Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçланă. Иртнĕ çулталăк пирĕн çĕршывшăн хаяр йывăрлăхсемпе хăйсем витĕр тухнă çул, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем фашистла Германие хирĕç вăрçă пыракан этемлĕх историйĕнче халиччен никăçан пулман геройлăх, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешнине, çирĕплĕхпе чăтăмлăхне кăтартнă çул пулчĕ.

Вăрçă пĕр çулталăк пынă хыççăн эпир шанчăклăнах çапла калама пултаратпăр: Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ чи хаяр испытанисене тӳссе ирттерме пултарчĕ, хĕрлĕ çирĕпленчĕ тата пирĕн çĕршыв çине пĕтĕм тĕнчери империализмăн хушшинчи чи вăрă-хурахла империалистсем-гитлеровецсем тапăннă вăхăтра, 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче, гитлерла Германие çĕнтерессе халĕ те вăл çирĕпленсе шанса тăрать.

Эпир урăххине те калама пултаратпăр: 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнчи вырсарникун гитлерла Германин кĕске вăхăтла та ирсĕр историйĕнче Гитлерăн черносотенла режимĕ пĕтес кун пуçланнине палăртакан хура кун пулса тăрать.

Германипе Совет Союзĕ хушшинчи фронтра пĕр çулталăк хушшинче пулса пынă çапăçусен вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи итогĕсем гитлерла ирсĕр ушкăнăн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи планĕсем пĕтĕмпех путланса ларни çинчен калаççĕ. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне хирĕç захватчикла вăрçă пуçласа, нимĕç империалисчĕсем Хĕрлĕ Çара тата пирĕн çĕршыва пĕр уйăх çурă-икĕ уйăх хушшинче парăнтарма шутланă. Çиçĕмле хăвăртлăхпа вăрçă туса илес авантюристла идейăна тĕп вырăна лартса, вĕсем вăрçа хăвăрт тата кĕске вăхăт хушши туса пынипе ăнăçусем тума пăхнă. Гитлерла картежниксем пысăк йăнăш турĕç, вĕсен ĕç тухмарĕ. Вăрçă—вăрăма тăсăлакан вăрçă пулса кайрĕ. Нимĕçсен пĕтĕм вăй-хала пухса çапăçма тăрат, çавна тума вĕсен вăйĕ çитмест. Гитлерла Германи юн ăшне путать, катастрофа патнелле пырать.

Совет çĕршывне вăрă-хурахла тапăнса, Гитлерăн власри çыннисем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсенчен уйăрса, ăна пĕртĕччĕн тăрантса хăварма, Совет Союзне хирĕç коалици тума, çав коалицие Великобритания тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене кĕртме, Совет Союзне хирĕç пĕтĕм тĕнчери государствăсен походне организацилеме, Совет çĕршывĕн çарне аркатса тăкма, унтан вара ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсемпе çĕршывсене пĕчченшерĕн çапса аркатса пĕтерме шутласа хунă. Анчах Гитлер кунта та пысăк йăнăш турĕ.

Великобритания тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, хăйсен пурнăçри интересĕсене шута илсе, гитлеризма хирĕç тата Европăра унпа пĕрле вăрçакан тӳссене хирĕç кĕрешме Совет Союзĕпе пĕрлештерчĕç.

Хĕрлĕ Çар тата совет халăхĕ геройла кĕрешни,—Гитлер çарне хирĕç кĕрешме çĕрте вăрçăн йывăрлăхне иртнĕ çулта совет халăхĕ çине ӳкрĕ,—пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене тĕлĕнтерсе савăнтарчĕ, вĕсене пурне те ылханлă гитлеризма хирĕç кĕрешме хавхалантарчĕ.

Отечественнăй вăрçă пĕр çулталăк хушши пынă вăхăтра пирĕн çĕршывăн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсем ӳсрĕç тата çирĕпленчĕç. Великобритания тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăрçăра тата экономика тĕлĕшĕнчен Совет Союзне пулăшассине уйăхран уйăхах ӳстерсе пыраççĕ. Британи авиацийĕ тата Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс флочĕ нимĕçсемпе итальянецсен фашистла вăрă-хурахĕсене вăйлăнрах та вăйлăнрах пыра-пыра çапаççĕ.

Гитлерла Германие тата Европăра унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă пĕтнĕ хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен ССР Союзĕпе Великобритани хушшинче кăçалхи майăн 26-мĕшĕнче тунă договор, çавăн пекех агрессие хирĕç вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви хушшинче июнĕн 11-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тĕнчери демократилле аслă державăсен çитес çывăх вăхăтрах Европăра иккĕмĕш фронт туса хурас тĕллĕве тата 1942 çулта Гитлерăн вăрçă машинине пĕтĕмпех аркатса тăкас тĕллĕве çине тăнине кăтартса параççĕ.

ССР Союзĕн, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен туслăх çыхăнăвĕсем çирĕпленни, гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçре вĕсем хăйсен вăрçăри вăй-хăватне пĕрлештерме тăрăшни Гитлер çарне, пусмăрçисемпе çывăхĕсен çарне пĕтĕмпех пĕтерес куна хăвăртлатса çывăхартассĕ.

Шăпах та çавăнпа ĕнтĕ Совет Союзĕнчи халăхсемпе Хĕрлĕ Çар Англипе Совет Союзĕ хушшинче майăн 26-мĕшĕнче тунă договора тата Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви хушшинче тунă килĕшӳве ырласса тата виçĕ аслă державăсен пĕтĕм вăйĕпе вĕсен хĕçпăшалĕн пĕтĕм хăватне пирĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшман—гитлерла Германия часах хăйĕн ĕнси çинче туйса илессине шанса тăрассĕ. (**Алă çупассĕ**).

Эпĕ пирĕн правительствăн тулашри политикине ырлама сĕннишĕн тата Англипе Совет Союзĕн договорне ратификацилессишĕн тăратăп.

Депутат юлташсем! Пирĕн тăван тата мухтавлă Мускав ĕççыннийĕсем вăрçă пуçланнă малтанхи кунранпах çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнче хăйсен тивĕçлĕ ĕçне çирĕппĕн те пархатарлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Мускавра пурăнакан нумай вуншар пин çынсем, алла хĕçпăшал тытса, пирĕн тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхне, ирĕклĕхне тата чыслăхне сыхласа усрассишĕн фронтра кĕрешеççĕ. Мускаври рабочисем фабрикăсемпе заводсенче, нимĕнле йывăрлăхсене те пăхмасăр, кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе, юратнă Хĕрлĕ Çар валли тĕрлĕ тĕслĕ тата чи лайăх хĕçпăшал туса параççĕ. Мускав халăхĕ, сывлăшран тапăннинчен сыхланас ĕçри боецсемпе пĕрле, хăйĕн тăван хулине тăшман вĕççе пыр-са тапăнассинчен çăлса хăварчĕ. Эсир, депутат юлташсем, сирĕн столица тĕрĕсех лайăх ларнине тата сиенленменнине куратăр. (**Тăвăллăн алă çупассĕ**). Вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлессишĕн çине тăрса кĕрешме хатĕр тăракан хамăрăн тăван Мускава куратăр. (**Алă çупассĕ**).

Фронт тӳрремĕнех Мускава хăратса тăнă кунсем те пулчĕç, ун чухне Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен тăван столицине пулăшма васкаса пычĕç.

Çав кунсенче Мускав çыннисем, пĕчĕккисенчен пуçласа ваттисем таринех, пĕтĕм çĕршывпа пĕрле Сталин юлташ ертсе пынипе (**тăвăллăн алă çупассĕ, Сталин юлташа саламланă сăмахсем илтĕнеççĕ. Пурте тăраççĕ**) геройла Хĕрлĕ Çара Мускава сыхласа хăварма, Мускав патĕнче фашистла йыткĕтĕвĕсене аркатса тăкма, вĕсене Хĕвеланăçнелле хăваласа яма пулăшрĕç.

Москвичсем çакна пĕлеççĕ: вĕсен, пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăхăнни пекех, малашне тата çĕнĕ те çĕнĕ жертвăсем ыйтакан хаяр кĕрешӳре çапăçмалла пулать. Анчах совет государствине сыхласа хăварас ятпа, совет халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕн ячĕпе, пирĕн тăван çĕршывăн чыслă та савăнăçлă малашлăхĕн ячĕпе, Мускав ĕççыннийĕсем, пирĕн пĕтĕм халăх пекех, ылханлă тăшмана — гитлеризма эпир пĕтĕмпех çĕнтерессине çирĕппĕн шанса тăраканскерсем, çĕнĕ испытанисем витĕр тухма, кирек мĕнле жертвăсене те тӳссе ирттерме тата çĕнĕ çапăçусенче пулма хатĕр. Нимĕçсен фашистла çарне аркатса тăкатпăр, гитлеризма пĕтерсе хуратпăр! (**Тăвăллăн, нумайччен алă çупассĕ**).

Сывă пултăр совет халăхĕн юратнă ывăлĕ — геройла Хĕрлĕ Çар! (**Нумайччен алă çупассĕ**).

Сывă пултăр пирĕн аслă тăван çĕршыв! (**Пурте ура çине тăраççĕ. Нумайччен алă çупассĕ**).

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата полководец Сталин юлташ! (**Сталин юлташа хисеплесе залрисем пурте ура çине тăрса тăвăллăн алă çупассĕ. «Урра» кăшкăрнисем илтĕнеççĕ**).

А. А. ЖДАНОВ депутатăн сăмахĕ

(ЛЕНИНГРАД)

(**Нумайччен тăвăллăн алă çупассĕ, пурте ура çине тăраççĕ. Жданов юлташа оваци туса саламлассĕ**).

Депутат юлташсем!

Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă пĕтнĕ хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче тунă договор, Правительство ратификацилеме Верховный Совета тăратнăскер, тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ Лондонпа Вашингтонра туса ирттернĕ калаçусем ирĕклĕхе юратакан халăхсем этемлĕхĕн ылханлă тăшманне хирĕç — гитлерла Германие хирĕç туса пыракан кĕрешӳре питех те паха тапхăр пулса тăрать. Çав договор гитлерла империализма хирĕç кĕрешекен ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен чи çывăх интересĕсемпе çыхăнса тăрать, ăна тăшмана çапса аркатас ĕмĕтпе тунă.

Молотов юлташ Лондонпа Вашингтонра туса иртттернĕ калаçусенче 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт туса хумалли ниепле те хая хăвармалла мар задачăсем тĕлĕшпе пĕтĕмĕшпех калаçса татăлнине пула договорăн пĕлтерĕшĕ татах та ытларах çирĕпленет. Çав вăхăтрах договор Гитлера хирĕçле коалицин мĕнпур участникĕсем вăрçă пĕтнĕ хыççăн тĕрĕс те çирĕп мир тăвас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрассин никĕсне хывса хăварать.

Договор гитлерла бандăпа унăн хӳрешкисене çавтери хаяррăн пырса çапать. Гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен ирĕклĕхе юратакан халăхсен коалицин ретне пăсма хăтланакан гитлерла ушкăнăн ĕмĕчĕсене çав договор пĕтĕмпех аркатса тăкать.

Сталин юлташ «пирĕн тăван çĕршывăн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсем юлашки вăхăтра нихăçанхи пек мар çирĕпленчĕç» тесе каланă сăмахсем çавтери хăватлăн тӳрре тухаççĕ. Договор тунине Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем пĕтĕм чун-чĕререн кăмăлласа йышăнчĕç. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç аслă çулпуç тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, геройла, мĕнпур прогрессивнăй этемлĕхе тĕлĕнтерсе, савăнтарса кĕрешекен пирĕн çĕршыври халăхсен массисем договора хĕрӳллĕн саламлаççĕ. **Нумайччен тăвăллăн алă çупассĕ. Пурте ура çине тăраççĕ**).

Депутат юлташсем! Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă пĕтнĕ хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен ССР Союзĕпе Великобритани хушшинчи договора алă пуснине, çавăн пекех тата агрессие хирĕç вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен ССР Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хушшинчи килĕшӳве алă пуснине Ленинград ĕççыннийĕсем, ăна геройла хӳтĕлекенсем — Ленинград фронтĕнчи тата Хĕрлĕ ялавлă Балтика флотĕнчи боецсемпе командирсем тата политработниксем пĕтĕм чун-чĕререн хапăлласа пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç.

Çав историллĕ документсене çутсе ярас майпа пулса иртнĕ пухусемпе митингсенче Ленинградри рабочисемпе инженерсем, Ленинград интеллигенцийĕ Совет Правительствин тулашри политики, Сталинла политика, тĕрĕс те аслă пулнине çирĕплетсе калаçĕç, — çав политикăна пула ирĕклĕхе юратакан халăхсен çапăçури туслăхне туса хунă тата вăл туслăх çирĕпленсе пырать, çав политикăна пула Гитлера хирĕçле коалицири çĕршывсен хăвачĕ ӳссе пырать. (**Алă çупассĕ**).

Киров заводĕнчи чугун шăратакан цехри мастер Афоничев юлташ Киров рабочийĕсен митингĕнче çапла каларĕ: «Совет Союзĕпе Англия тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи боевой туслăх çирĕпленсе пыни пире çĕнĕ вăйпа çĕнĕ шанчăк кӳрет, эпир юнĕçен Гитлерпа унăн ушкăнне 1942 çулта таптаса лапчăтатпăрах. Эпир хамăрăн Хĕрлĕ Çара хăйĕн историллĕ миссине пурнăçа кĕртмешкĕн пулăшас тесе икĕ хут, виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр».

«Фашизма пĕтерес ĕçе васкатас тесен, пирĕн боеприпассемпе хĕçпăшал туса кăларассине ӳстермелле. Çакă вăл пирĕн таса тивĕçлĕх. Манăн бригада плана 150 процент тултарма сăмах парать»,—терĕ Аладьин юлташ, Марти ячĕпе тăракан заводăн цехĕсенчен пĕринче ĕçлекен бригадир.

Англипе договор туни çине тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе килĕшӳ туни çине Ленинград ĕççыннисем çапла ответлеççĕ. Сталин юлташăн приказне пурнăçа кĕртме тата гитлерла захватчиксене 1942 çулта çапса аркатма Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те туса памалла, мĕнпур прогрессивнăй этемлĕхĕн ылханлă тăшманне çĕнтерессишĕн вăя хĕрхенмесĕр, икĕ хут, виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлемелле — çак ĕмĕт мĕнпур совет патриочĕсене хавхалантарса пынă пекех хавхалантарса пырать ĕнтĕ ленинградецсене. Çак ĕмĕт, çак задача отечественнăй аслă вăрçăн çулталăкĕнче Ленинградецсене тăтăшах хавхалантарса пычĕ.

Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче: «Хĕрлĕ Çарăн, Хĕрлĕ Флотăн тата Совет Союзĕнчи мĕнпур граждансен совет çĕрĕн кашни пусăмне хӳтĕлемелле, хамăрăн хуласемпе ялсемшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçмалла, хамăр халăха тивĕçлĕ хăюлăха, пуçарулăха тата тавçăрулăха кăтартмалла» тесе каланă сăмахсем Ленинград çыннисемшĕн çул кăтартса пыракан çăлтăр пулса тăчĕç, вĕсене кĕрешӳпе ĕçе хавхалантарчĕç, вĕсем хăйсен вăйĕсене иксĕлми шанса тăрассине çĕклерĕç.

Иртнĕ çулти сентябрь уйăхĕнче Гитлерăн пирĕн хулана штурмпа тытса илмелли планне аркатса тăксан, Ленинград патĕнчи хаяр çапăçусенче фашистсен кадрти чи лайăх дивизийĕсем хăйсене валли вилĕм тупсан, ултавлă ирсĕр тăшман Ленинград çыннисен тăшмана хирĕç тăрас вăй-хăватне вырлăх блокадипе, сывлăшран бомбăсем пăрахнипе тата артиллерирен пенипе хавшатса çĕмĕрме шут тытрĕ. 10 уйăх хушши ĕнтĕ хула тăшман блокадин обстановкинче, тӳрремĕнех фронт çывăхĕнче пурăнать, вăл хăй фронт пулса тăрать.

Тăшман çавăрса илнĕ условисенче Ленинград тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсемпе хĕнхурсем çинчен кунта тĕплĕн каласа тăма кирлех те мар. Пĕр çакна кăна каламалла: Гитлерăн хулана штурмпа тытса илмелли планĕ яланлăхах путланса ларнă пекех, унăн хулана выçлăх блокадипе çынçиенле пăчлантарса лартмалли планĕ те ăнăçлă пулмарĕ. Пирĕн тăван çĕршывăн ылханлă тăшманĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳри çавтери пысăк йывăрлăхсем Ленинграда хӳтĕлекенсен вăй хăвачĕпе паттăрлăхне хавшатма пултараймарĕç. Сывлăшран бомбăсем пăрахни те, артиллерирен пени те, хулана апат-çимĕç парса тăрас ĕçре йывăрлăхсем пулни те, тăшман пропаганда наркăмăшĕпе тулнă фашистла листовкăсемпе усă курса тата хăйĕн шпионĕсемпе лазутчикĕсем урлă пирĕн кĕрешӳри ретсене аркатса яма хăтланни те, Ленинградăн пĕтĕм тĕнчипе паллă пулса тăракан культура пуянлăхĕсене аркатни те тăшмана хăй умне лартнă ĕмĕте пурнăçа кĕртме май памарĕç. Пачах та урăхла, Ленинград çыннисем умне килсе тухнă хаяр йывăрлăхсем пирĕн кĕрешӳри тата çĕнтерӳ тумалли вăй-хăвата татах та ытларах туптаса çирĕплетрĕç, пирĕн çапăçури хăвата çĕклерĕç, гитлерла Германие çĕнтерессишĕн мĕнпур пек йывăрлăхсене çĕнтерме хатĕр тăнине татах та ытларах çирĕплетрĕç, тăшмана курайманнине татах та ытларах чĕртсе ячĕç, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕр çын юлмиччен пурне те пĕтерсе тăкассишĕн пыракан кĕрешӳре пирĕн хаярлăха татах та ытларах çуламлантарса çĕклерĕç. (**Алă çупассĕ**).

Гитлерла захватчиксене хирĕç тĕрĕслĕхшĕн пыракан отечественнăй вăрçăн вут çуламĕнче Ленинградпа ăна хӳтĕлекенсен хăвачĕ туптанса çирĕпленчĕ. Ленинград фронтĕнчи войскăсем çирĕпрех те опытлăрах пулса тăчĕç. Ленинграда артиллери тĕлĕшпе, инженерла ĕç тĕлĕшпе хӳтĕлес тата сывлăшран килсе тапăннинчен хӳтĕлес ĕç татти-сыпписĕр çĕнелсе лайăхланса пырать.

Иртнĕ çулталăк кашни ленинградецшăн йывăр экзамен пулса тăчĕ Пирĕн умри йывăрлăхсем мĕн чухлĕ пысăкрах пулчĕç, кашни рабочирен, инженертан, хозяйственникран, совет работникĕнчен çавăн чухлĕ ытларах ыйтмалла пулчĕ. Кĕрешӳре тухса тăракан халиччен пулман чи пысăк йывăрлăхсене тата çĕнĕ задачăсене çĕнтерсе пурнăçа кĕртмешкĕн Ленинград çыннисен хăйсен чĕрисенче вăй-хăватпа пĕлӳлĕх тупмалла пулчĕ. Фронта пулăшас задачăсем тавра Ленинград промышленноçĕнчи работниксен пуçарулăхĕ çăлкуçĕ пек тапса вĕреме тытăнчĕ. Питех те кирлĕ çар предприятийĕсен ĕçĕ Ленинград хулине уйрăмах йывăр килнĕ кунсенче те чарăнса тăмарĕ — топливăпа электроэнерги çитмесчĕ, апат-çимĕç çителĕксĕрри çынсен вăйĕсене хавшататчĕ,—çапах та ĕç чарăнса тăмарĕ.

Ленинград промышленноçĕ, унăн кадрĕсем хăйсем çавтери тавçăруллăн маневр тума пултарнине, чи йывăр лару-тăруран большевикла тухма пĕлнине тата хăйсен задачисене кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртме пултарнине иртнĕ хĕллехи блокада условийĕсенчи чи хаяр уйăхсенче кăтартса панă пек кăтартса паман.

Ленинград промышленноçĕ фронта танксем, тупăсем, минометсем, автомат хĕçпăшалсем, снарядсем, минăсем, гранатăсем тата ытти тĕрлĕ хатĕрсем парса тăнă, парса тăрать те. (**Алă çупассĕ**).

Ленинградра фронтпа тыл хушшинчи чикĕ çук. Пурте пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе пурăнаççĕ — тăшмана 1942 çулта çапса аркатма мĕн кирлине пурне те тумалла. Кашни Ленинград çынни, арçынпа хĕрарăм, кĕрешӳре хăйĕн вырăнне тупрĕ, вăл совет патриочĕн тивĕçлĕхне тӳрĕ кăмăллăн пурнăçа кĕртсе пырать.

Депутат юлташсем! Ленинград çĕршывпа çыхăнса тăнине тăшман темпек пăсма хăтланнă пулин те, çакă вăл ăнăçлă пулмарĕ. Ленинград хăйне пĕр минутлăха та тăван çĕршывран татăлнă пек туйса тăман. Ленинградшăн пĕтĕм çĕршыв чĕререн юратса тăрăшнă тата тăрăшать те. Пирĕн аслă тăван çĕршыван мĕнпур облаçĕсенчен, пирĕн çĕршыври мĕнпур союзлă республикăсенчен, крайсемпе облаçсенчен Ленинграда тăванла пулăшу килсе тăнă тата халĕ те татти-сыпписĕррех пырса тăрать. Çав пулăшу вăл чи йывăр кунсенче те чарăнса тăман, çав пулăшăвăн мĕнпур

Юлашки 2-мĕш страницăра

ÇĔНТЕРӲ ДОГОВОРНЕ КОЛХОЗНИКСЕМ ХĔРӲЛЛĔН ЫРЛАÇÇĔ

КАНАШ, июнĕн 20-мĕш. (**Телефонпа**). Партипе Советăн тата комсомолăн районри активĕ, агитаторсемпе вулавçăсем Совет Союзĕ Великобританипе договор тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствипе килĕшӳ туни çинчен колхозниксене ăнлантарса параççĕ. Виçĕ хăватлă держава гитлерла Германие хирĕç пĕрле кĕрешме тата çĕнтерӳ тунă хыççăн пĕрле туслăн пурăнма калаçса татăлни районри колхозниксен ĕçлес хастарлăхне вăйлăн çĕклерĕ.

Колхозниксем халĕ уйсенче хĕрсех çум çумлаççĕ. Июнĕн 17-мĕш тĕлне районĕпе пурĕ 10 пин гектар тырăна çум-курăкĕсенчен тасатнă. Асхвари «Хĕрлĕ хĕм», Катекри Киров ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем тырăсене çум курăкĕсенчен пĕрер хут тасатса тухнă. Халĕ тепрер хут çумлама тытăннă. Колхозниксем ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ. «Хĕрлĕ хĕм» колхозра П. Петрова, Д. Трофимова, С. Порфирьева колхозницăсем çум çумлас нормăна 140—150 процент тултарса ĕçлеççĕ. Ватă колхозниксем те, çамрăк ачасем те пĕр кăмăлпа хастарлăн ĕçлеççĕ. 62 çулти колхозник С. Васильев юлташ июнĕн 14-мĕш тĕлне 177 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă, М. Афанасьев колхозник 70 çула çитнĕ пулин те кăçал 65 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ЛАРӐВӖ

А. А. ЖДАНОВ депутатӑн сӑмахӗ

(Юлашки. Пуҫламӗшӗ 1-мӗш страницӑра).

Ленинград ячӗпе пӗтӗм чун-чӗререн тав тума ирӗк памашкӑн ыйтатӑп. (**Нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ**).

Ленинградшӑн пирӗн ҫулпуҫ тата учитель Сталин юлташ чӗререн юратса тӑрӑшнине эпир тӑтӑшах туйса тӑнӑ, туйса тӑратпӑр та. Эпир пӗлетпӗр, туятпӑр — Сталин пирӗнпе. (**Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ**). Кашни ленинградец, пирӗн фронтри кашни боец ҫакӑнта ӗнтӗ ҫӗнтерӳ шанчӑкне курать, гитлерла ылханлӑ захватчиксене хирӗҫ кӗрешме ҫакӑнтан ӗнтӗ хӑйне валли ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ вӑйсем илсе тӑрать.

Депутат юлташсем! Совет Правительствин тулашри ӑслӑ политикине тата ССР Союзӗпе Великобритани хушшинчи договора пурте пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса ырлакан Ленинград фронтӗнчи войскӑсен, Ленинградри рабочисен тата мӗнпур ӗҫсыннисен шухӑшӗсене калаҫа парса, эпӗ кунта тухса каланӑ депутатсем правительствӑн тулашри политикине ырлама сӗнни ҫумне, гитлерла Германие тата Европӑри унпа пӗрле вӑрҫакан ҫӗршывсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзлӑ пуласси ҫинчен, вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси ҫинчен Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Великобританири Пӗрлешӳллӗ Королевство хушшинче тунӑ Договора ратификацилеме сӗнни ҫумне пӗрлешетӗп.

Юлташсем! Гитлерла вӑрӑ-хурахсене ҫапса аркататпӑрах. Ирӗклӗхе юратакан халӑхсен ополченийӗ татти-сыпписӗр ӳссе пыни тата хамӑрӑн вӑйсем ӳссе пыни пирӗн тӗрӗс ӗҫ пӗтӗмӗшпех ҫӗнтерес куна ҫывхартать. Пирӗн ҫулпуҫ тата ӑслӑ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе Совет Союзӗнчи халӑхсем унӑн приказне пурнӑҫа кӗртӗҫ, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене 1942 ҫулта ҫапса аркатӗҫ. (**Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ. Пурте ура ҫине тӑраҫҫӗ, залра оваци**).

Гитлерла Германие тата Европӑри унпа пӗрле вӑрҫакан ҫӗршывсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзлӑ пуласси ҫинчен, вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси ҫинчен Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Великобританири Пӗрлешӳллӗ Королевство хушшинче тунӑ Договора ратификацилесси

Гитлерла Германие тата Европӑри унпа пӗрле вӑрҫакан ҫӗршывсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзлӑ пуласси ҫинчен, вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси ҫинчен Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ тата Великобританири Пӗрлешӳллӗ Королевство хушшинче Договор туни ҫинчен Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ Вячеслав Михайлович МОЛОТОВ юлташ пӗлтернине тата Правительство Договора ратификацилеме сӗннине итленӗ хыҫҫӑн, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗ ҪАПЛА ЙЫШӐНАТЬ:

1. Правительствӑн тулашри политикине ырлас.

2. Гитлерла Германие тата Европӑри унпа пӗрле вӑрҫакан ҫӗршывсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзлӑ пуласси ҫинчен, вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси ҫинчен Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ тата Великобританири Пӗрлешӳллӗ Королевство хушшинче Лондон хулинче 1942 ҫулти майӑн 26-мӗшӗнче тунӑ Договора ратификацилес.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти июнӗн 18-мӗш.

В. М. Молотов докладне пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ

ҪЕМӖРЛЕ, июнӗн 20-мӗш. (**Хамӑр корр.**). Комбинатри рабочисемпе служащисем Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ СССР Верховный Совечӗн ларӑвӗнче Совет Союзӗпе Великобританири Пӗрлешӳллӗ Королевство хушшинче тунӑ договора ратификацилесси ҫинчен тунӑ доклада пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ.

Доклада итлене хыҫҫӑн рабочисемпе служащисем [illegible]

Совет Союзӗпе Великобритани хушшинчи союзлӑ договор тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе тунӑ [illegible] ҫӗнтерӳ тума, ҫӗ-леме хавхалантараҫҫӗ. Комбинатӑн цехӗсем июнь уйӑхӗнчи производствӑллӑ плана срокчен пурнӑҫлама обязательствӑсем илеҫҫӗ. Пӗр цех июнь уйӑхӗнчи плана 125 процент тултарма пулчӗ.

Комбинатри рабочисемпе служащисем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тӑвас ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ. [illegible] 17.453 тенкӗ пухса панӑ. Назаров юлташ начальник пулса ӗҫлекен цехри [illegible] «Осоавиахим Чувашии» звенине [illegible] 5.100 тенкӗ пухса панӑ.

Х. ЛИСИН.

Ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлеме мобилизацилесси мӗнле пырать

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «Хуласенчи тата ялсенчи ӗҫлеме пултаракан халӑха ялхуҫалӑх ӗҫне мобилизацилемелли йӗрке ҫинчен» апрелӗн 13-мӗшӗнче йышӑннӑ постановлени [illegible]

Июнӗн 5-мӗшӗнче Чӑваш АССР Совнаркомӗ [illegible]

Хуласенче поселоксенче ӗҫлеме пултаракан халӑха тата шкулсенче вӗренекен ачасене ялхуҫалӑх ӗҫне мобилизацилес [illegible]

Д. МИТЬКОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 19-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 19-мӗшӗнче фронтӑн **Севастополь** участокӗнче хаяр ҫапӑҫусем пынӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Баренц тинӗсӗнче пирӗн карап противникӑн 15.000 тонна водоизмещениллӗ транспортне путарнӑ.

* * *

Июнӗн 18-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 25 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 30 лавне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 6 батарейине тата пулеметсен 20 точкине пусарса лартнӑ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн торпеда катерне путарнӑ.

* * *

Фронтӑн Севастополь участокӗнче нимӗҫсен фашистла войскисем, йывӑр ҫухатусем тӳснине пӑхмасӑр, пирӗн оборона рубежӗсене хаяррӑн атакӑлаҫҫӗ. Пирӗн пехотинецсем, моряксем тата артиллеристсем противникӑн атакисене сире-сире яраҫҫӗ, противника ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Севастополе геройла хӳтӗлекенсем пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче кӑна противникӑн пехотине пӗр полк ытла тата нимӗҫсен 20 танкне пӗтерсе тӑкнӑ, зенитнӑй артиллери противникӑн 10 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнче кӗрешекен пирӗн пӗр соединени противника хирӗҫ икӗ кун хушши ҫапӑҫса нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1.500 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 8 танкне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаҫсем противникӑн 3 орудине, 5 станковӑй пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 300 ҫынна ҫити вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн боецсен отрячӗ (Калинин фрончӗ) противникӑн тылне кӗрсе кайса С. ялӗн районӗнче темиҫе засада тунӑ. Пирӗн боецсем, хӑйсене пачах та палӑртмасӑр, ҫулпа пыракан 15 автоматчика ирттерсе янӑ. Вӗсем иртсе кайсан, противник пехотин колонни пырса ҫитнӗ. Пирӗн боецсем гитлеровецсене хӑйсем патнех ҫывхарма панӑ та автоматсемпе пулеметсенчен пеме пуҫланӑ, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Баландин юлташӑн батарейи (Кӑнтӑр фрончӗ), вӑйлӑн пеме пуҫласа, противникӑн боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ тата 2 орудине вӗсен прислугипе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нагорный лейтенантӑн подразделенийӗнчи минометчиксем тӑшманӑн пехоти пӗр ҫӗре пуханса тӑнине пӗлнӗ те темиҫе хутчен миномётсенчен пӗр харӑс пенӗ. Нимӗҫсем тарса саланнӑ, вӗсен 80 салтакӗ вилсе е аманса юлнӑ.

* * *

Май уйӑхӗнче нимӗҫсен командованийӗ Ленинград облаҫӗнчи партизансен отрячӗсен пӗр ушкӑнне хирӗҫ пысӑк карательнӑй экспедици артиллерипе, танксемпе, самолетсемпе янӑ. Пӗр уйӑх хушши ҫапӑҫса В. тата О. юлташсем командир пулса ертсе пыракан партизансем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 2.570 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ, 20 танк ҫӗмӗрнӗ, чугунҫул ҫинчи 5 состава тата 1 бронепоезда ӳпӗнтерсе янӑ. Партизансем нумай трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Гомель облаҫӗн районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен ушкӑнӗ, Д. юлташ ертсе пынипе, нимӗҫсен чугунҫул тӑрӑх горючи турттарса пыракан составне ӳпӗнтерсе янӑ. 30 цистерна тата ҫав состава сыхласа пыракан 13 салтак ҫунса кайнӑ.

* * *

Испанецсен «Кӑвак дивизийӗнчен» тыткӑна лекнӗ салтак Антонио Фабра Гомес ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ Испани Мароккинче ют ҫӗршыв легионӗнче тӑраттӑмччӗ. Март уйӑхӗнче капитан ротӑна пухрӗ те ҫапла каларӗ: Ротӑран 15 ҫынна «Кӑвак дивизие» яма приказ килчӗ, терӗ. Хӑй ирӗкӗпе каяс текенсем пулмарӗҫ. Вара капитан шӑпа яма сӗнчӗ. 15 ҫын шутне эпӗ те лекрӗм. Ватӑ салтаксем каласа кӑтартнисем пире хуйӑха ячӗҫ. Часах, фронта лексен, пире каласа кӑтартнинчен темиҫе хут ытларах йывӑрлӑхсем курса тӳсрӗмӗр. Вырӑссене хирӗҫ вӑрҫнӑ чухнехи йывӑр ҫапӑҫусем пире хавшатса ячӗҫ. Дивизи госпиталӗ чирленӗ тата аманнӑ салтаксемпе тулса ларнӑ. Госпитальте аманнӑ салтаксем урайӗнче йӑваланса выртаҫҫӗ, вӗсем выртакан улӑм тултарнӑ михсем вараланса, хуралса пӗтнӗ. Пурте пыйтланса кайнӑ. Апат-ҫимӗҫ питех те начар. Нимӗҫсем хӑйсемех ҫакна йышӑнатчӗҫ: пополнени пе килнӗ салтаксем хушшинче ку вӑрҫӑпа килӗшменнисем нумай, тетчӗҫ, ҫавӑнпа та вӗсем испанецсене шанмасчӗҫ. Хӑйсен ирӗкӗпе килнӗ хӑшпӗр салтаксене дивизире хӑйсене хӑйсем вӗлерекенсем тесе чӗнеҫҫӗ. Вӗсенчен куҫӑн-кӗретӗнех мӑшкӑлласа кулаҫҫӗ.

* * *

Поляк патриочӗсем Лодзь хули ҫывӑхӗнче оккупантсен транспорт самолетне пулеметран пенӗ. Самолет вут тивнипе хыпса кайнӑ та ҫӗре персе аннӑ.

Июнӗн 20-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 20-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусемех те пулман.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть нимӗҫ пехотин темиҫе атакине сире-сире пӑрахнӑ. Икӗ кун хушшинче пирӗн боецсем нимӗҫсен 3 танкне, 3 орудине тата темиҫе минометне пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 700 ҫын ытла вилсе пӗтнӗ.

* * *

Н-ски чаҫри артиллеристсем (Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ) противникӑн оборона тумалли пунктӗ ҫине вӑйлӑн тапӑннӑ. Пирӗн орудисенчен персе нимӗҫсен 3 дзотне ҫӗмӗрнӗ, пӗр йывӑр орудине пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Филатов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫри летчиксем нимӗҫсен войскисем пуханса тӑнӑ вырӑнсем ҫине тата противникӑн оборона тумалли ҫирӗплетнӗ вырӑнӗсем ҫине темиҫе хутчен вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахса нимӗҫсен 7 дзотне, 3 полевой орудине, 17 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен Лушников юлташӑн подразделенийӗнчи снайперсем 3 уйӑх ҫурӑ хушшинче 800 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав подразделенири снайпер Семенов юлташ 166 гитлеровеца, Яковлев юлташ 94 гитлеровеца тата Соловьев юлташ противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 80 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Волков юлташ командир пулса тӑракан чаҫри боецсем пӑшалсемпе пулеметсенчен персе противникӑн икӗ моторлӑ бомбардировщикне ӳкернӗ. Нимӗҫсен 2 летчикне тыткӑна илнӗ.

* * *

Партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ, Украинӑн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, противникӑн боеприпассем турттарса пыракан чугунҫул эшелонне сирпӗнтерсе янӑ. Ҫав ҫул тӑрӑх ҫӳресси виҫӗ кунлӑха чарӑнса ларнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 602-мӗш транспортнӑй батальонӗнчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Вилли Шульц ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн батальон Германирен фронт ҫывӑхӗнчи районсене ҫар грузӗсем турттаратчӗ. Юлашки рейс питех те ӑнӑҫсӑр пулчӗ. К. пункт патӗнче вырӑссен чаҫӗсем ҫӗмӗрсе кӗчӗҫ. Колоннӑра хӑрушла паника пуҫланчӗ. Хӑшпӗр шоферсем хӑйсен машинисене пӑрахсах тарчӗҫ. Теприсем грузовиксемпе тарма хӑтланчӗҫ. Машинӑсенчен пӗр пайӗ пылчӑк ӑшне лакса ларчӗ те ыттисен ҫулне пӳлсе хучӗ. Ҫул пӳлӗнчӗ. Эпир питӗ пысӑк ҫухатусем тӳсрӗмӗр. Оккупациленӗ районсенчи ҫулсем ҫинче эпӗ партизансем сирпӗнтерсе янӑ тата пӗтерсе тӑкнӑ машинӑсем нумай куртӑм. Нумаях пулмасть командовани приказ кӑларчӗ, унта тракт ҫинче е тракт ҫывӑхӗнче тӗл пулакан кашни вырӑс ҫыннине вырӑнтах персе пӑрахма хушнӑ».

* * *

Нимӗҫсен тыткӑна лекнӗ ефрейторӗ Ганс Ове ҫумӗнче ун патне амӑшӗ Гамбургран янӑ ҫырусене тупнӑ. Ҫав ҫырусенчен илнӗ уйрӑм вырӑнсене пичетлетпӗр: «...Гейнц Гербена паян чӗннӗ, вӑл 17 ҫулта... Вилли ҫак уйӑхра 17 ҫул тултарать. Вӑл та часах салтак пулать... Ӗнер ҫӗрле 11 сехетрен пуҫласа 3 сехете ҫитиччен сывлӑшран килсе тапӑннӑ пирки тревога пулчӗ. Бомбоубежищӗре ҫутӑ сӳнсе ларчӗ. Любек хулин тӑватӑ пайӗнчен виҫӗ пайне ҫӗрпе танлаштарнӑ... Росток хули ҫине виҫӗ каҫ хушши вӗҫсе пыра-пыра тапӑнса бомбӑсем пӑрахнӑ. Унта халь ӗнтӗ Любекри пекех пушанса юлнӑ. Кун пекки халиччен нихӑҫан та пулманччӗ. Хейнкель завочӗсем те арканса пӗтнӗ пулмалла. Вилнисем нумай. Мӗн пулӗ ӗнтӗ малалла пирӗнпе? Гамбурга та ҫавӑн пекех туса хурӗҫ-ши ӗнтӗ вӗсем?»

* * *

Гитлерла влаҫсем Норвегирен Германие нимӗҫсен 800 жандармне ӑсатнӑ, «вӗсен шухӑш-кӑмӑлне вырӑнти халӑхпа ҫыхӑну тытни пӑснӑ» теҫҫӗ. Жандармсенчен нумайӗшне арестленӗ.

* * *

Туркмен республикинчи ӗҫсыннисем красноармеецсемпе командирсем тата политработниксем валли фронта 34 вагон парнесем янӑ. Парнесем хушшинче колбаса, пыл, типӗтнӗ ҫырла-ҫимӗҫсем, эрех, папироссем, супӑнь, портсигарсем, табак енчӗкӗсем, термоссем, патефонсем тата ытти тӗрлӗ япаласем чылай.

Папена „тапӑнни" ҫинчен пуҫарнӑ провокациллӗ ӗҫ тӑрӑх Анкара сучӗ йышӑннӑ киревсӗр приговор

Павловпа Корнилова пӗр айӑпсӑрах 20-шер ҫуллӑха тӗрмене лартмалла суд тунӑ

АНКАРА, июнӗн 17-мӗш. (ТАСС). Паян Анкарари судра Папен ҫине «тапӑннӑ» тесе пуҫарнӑ ӗҫе пӑхса пӗтернӗ. Суд ҫакӑн пек приговор йышӑннӑ: Павловпа Корнилова Папен ҫине «тапӑннӑшӑн» айӑплӑ тесе пӗлтернӗ те кашнине 20 ҫуллӑха тӗрмене хупмалла суд тунӑ, Абдурахман тата Сулейман провокаторсене 10 ҫул хушши тӗрмере хупса усрамалла тунӑ. Суд ҫавӑн пек приговор йышӑннӑ пирки судра пулнисем пурте, Германи посольствин тата нимӗҫсен фашистла хаҫачӗсен представителӗсемсӗр пуҫне, йӑлтах тӗлӗннӗ.

Приговора ҫырса йышӑнма суд шӑпах пӗр эрне хушши хатӗрленнӗ. Ҫапах та вӑл ҫав вӑхӑт хушшинче те приговора лайӑх йӗркелесе ҫырма пултарайман, нимӗнпе те сӑлтавламасӑр ҫырнӑ кӗске текста кӑна вуласа панӑ, судпа айӑпланнисен «сӑлтавӗсене» кӑтартнӑ приговора каярахпа алла паратпӑр тесе пӗлтернӗ. Ҫав кӗске текстра ҫырнӑ тӑрӑх, Павловпа Корнилов вара Омера, Абдурахмана тата Сулеймана «хӑйсен енне ҫавӑрса» Папен ҫине «тапӑнма» хӗтӗхленӗ пулать, Папенӑн, ун ҫине «тапӑннӑ» пирки, хӑрах хӑлхи илтесси чакнӑ пулать. Суд пынӑ чухне сирсе янӑ суя сӑлтавсене нумайӗшне приговорта асӑннӑ. Анчах ҫав сӑлтавсене ҫирӗплетсе кӑтартни ҫук. Папена «тапӑнни» ҫинчен пуҫарса янӑ ӗҫ тӑрӑх йышӑннӑ приговорта совет гражданӗсен мӗн чухлӗ те пулин айӑп пурри курӑнмасть.

Суд председателӗ Павловпа Корнилова ҫакна пӗлтернӗ: Турци законӗсем тӑрӑх, 15 ҫул ытла хупса усрамалла тунӑ приговорсене кассацисем илекен судӑн пӑхса тухса тӗрӗслемелле тата, кунсӑр пуҫне, судпа айӑпланисем Турци хыснине 10 лир тӳлесе, кассацисем илекен суда хӑйсем енчен жалоба пама пултараҫҫӗ, тенӗ.

Приговора вуласа панӑ хыҫҫӑн Павлов ҫапла каланӑ: «Корнилов тата эпӗ приговора суд йӑнӑшӗ тесе шутлатпӑр, вӑл тӗрӗс марри ҫинчен жалоба паратпӑр», тенӗ. Анчах приговора вуласа панӑ хыҫҫӑнах тухса кайма васканӑ судьясем Павловӑн ҫак сӑмахне те итлесе пӗтермен.

Халӑх приговора питех те шӑп пулса итленӗ, ӑна итленӗ хыҫҫӑн нумайӗшӗсем приговорпа кӑмӑлсӑр пулни ҫинчен пӗр-пӗрне каласа панӑ. Павловпа Корнилова айӑплӑ тесе йышӑнни хӑех судра нимӗнле тӗрӗслӗх те пулманни, судри следствин результачӗсене шута илменни ҫинчен калать. Судра следстви пынӑ чухне совет гражданӗсем вӗсене тӗрӗс мар айӑпланине пӗтӗмпех тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, вӗсем пӗртте айӑплӑ маррине кӑтартса панӑ. Ҫак ӗҫе судра пӑхса тухасси 11 эрнене тӑсӑлнӑ, ҫав вӑхӑтра суд ларӑвӗсем 12 кун кӑна пулнӑ. Суд час-часах, айӑплама нимӗнле сӑлтав та ҫук пирки, ӗҫе пӑхса тухассине тӑснӑ. Прокурорӑн нимӗнпе ҫирӗплетмен сӑлтавӗсене, ӗҫе пуҫарса янӑ чухне ҫырса хунӑскерсене, процесс пынӑ май вӗсенчен нимӗн те юлман пулсан та, Папен ҫине «тапӑнни» ҫинчен шухӑшласа кӑларнӑ ӗҫ суя пулни судра палӑрнӑ пулсан та, суд тепӗр хут асӑнса тухнӑ.

Ҫак ним йӗрки ҫук процесс мӗнле иртнине сӑнакан ютҫӗршыв ҫыннисем Анкарари суд кирек мӗнле судшӑн та тивӗҫлӗ пулмалли нормӑсене пӑхманнине палӑртаҫҫӗ. Папена «тапӑнни» ҫинчен гестапо хатӗрленӗ ӗҫпе хӑйсем нихӑш енчен те ҫыхӑнманнине Павловпа Корнилов питех те лайӑх кӑтартса панине ютҫӗршывсен ҫыннисем йышӑнаҫҫӗ.

Турци журналисчӗсемпе обществӑлла деятелӗсем чылайӗшӗ, Совет Союзӗпе туслӑ ҫыхӑнусем тытассишӗн тӑракансем, паян ТАСС корреспондентне Анкарари суд тӗрӗс мар тата нимӗнпе те ҫирӗплетсе кӑтартман приговор йышӑнни Совет Союзӗнчи общественноҫа кӑмӑлсӑр тӑвать, тенӗ.

Черчилль Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче пулни

ЛОНДОН, июнӗн 19-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Рузвельтӑн личнӑй секретарӗ Эрли, Черчилльпе Рузвельт вӑрҫӑ туса пырас тата ҫӗнтерӳ тӑвас ыйтусемпе канашлаҫҫӗ, тесе каланӑ. Иккӗмӗш фронтӑн проблемине сӳтсе-явасси кун йӗркинче тӑрать-и?—тесе панӑ ыйту ҫине ответлесе, Эрли ҫапла каланӑ: «Черчилль ҫак тӗллевпе килнӗ пуль, тесе малтанах шутлатӑп эпӗ», тенӗ. Черчилль Вашингтона кайни пирки «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаҫат ҫапла ҫырать: «Нимӗҫсене хирӗҫ тапӑнса пырасси Черчилль калаҫӑвӗнче малти вырӑнта тӑрать. Черчилльпе пӗрле Алан Брук тата Исмэй генералсем кайни ҫӗр ҫинчи операцисем вӗсем сӳтсе-явакан проблемӑсенчен тӗп проблема пулса тӑрать, тесе шутлама май парать. Ҫав вӑхӑтрах вӑрҫӑн тӗп проблемисене, вӑл шутрах тоннаж ыйтӑвне те, пӑхса тухаҫҫӗ».

Ҫурҫӗр Францин ҫыранӗсенче пурӑнакансене эвакуацилени

ЛОНДОН, июнӗн 19-мӗш. (ТАСС). АФИ агентстви Францирен чиккинчен ҫапла пӗлтерет: Германи влаҫӗсем Францин Булоньпа Дьепп хушшинчи ҫыранра пурӑнакан халӑхне эвакуацилесси ҫинчен приказ панӑ. Ҫак мерӑна Франци халӑхне Англин ударлӑ групписене пулӑшма чӑрмантарас тӗллевпе ирттереҫҫӗ, тесе кӑтартса параҫҫӗ.

Болгарире оппозициллӗ чиновниксемпе кӗрешни

ЖЕНЕВА, июнӗн 19-мӗш. (ТАСС). Софирен пӗлтернӗ тӑрӑх, Болгари правительствин гитлерла политики пирки тарӑхни государство чиновникӗсен анлӑ массисем хушшинче те палӑрма пуҫланӑ. Ҫакна Болгарин «Дума» хаҫачӗ лайӑх кӑтартса парать. Вӑл: «Чылай чиновниксем правительство тӑшманӗсемшӗн ӗҫлеҫҫӗ тата саботаж тӑваҫҫӗ», тесе ҫухӑрашса ҫырать. «Государствӑна хирӗҫле элементсене» тасатас тӗллевпе чиновниксем хушшинче тунӑ тасату ытла та ҫемҫен иртрӗ тата «лайӑх результатсем памарӗ», тесе шутлать хаҫат. Хирӗҫле шухӑш-кӑмӑллӑ чиновниксене яланлӑхах хӑрушсӑр тӑвас тесе, «Дума» хаҫат, вӗсем службӑра кам пулнине пӑхмасӑрах, вӗсене хирӗҫ татӑклӑн кӗрешме ыйтать.

Ҫулйӗр ӗҫӗсене манса хӑвармалла мар

ШАХАСАН. (**Хамӑр корр.**). Районра ҫулйӗр тӑвас тата юсас ӗҫсем начар пыраҫҫӗ. План тӑрӑх чул 1.100 кубометр, хӑйӑр 6.135 кубометр хатӗрлемелле пулнӑ пулсан, хальхи вӑхӑта чул 98 кубометр, хӑйӑр 50 кубометр ҫеҫ хатӗрленӗ. Йывӑҫ хатӗрлес плана та ҫурри ытларах ҫеҫ тултарнӑ. Кӗперсемпе шыв трубисене юсас ӗҫе тытӑнман та темелле.

Райсовет исполкомӗ кӑҫалхи ҫулйӗр строительствин планне колхозсене 7 уйӑх каялла ҫитерсе панӑ. Анчах ҫав плана пурнӑҫлас тӗлӗшпе чылай колхозсем ку таранччен нимӗн те туман. «Чуваш ЦИК», «Орешино», Ленин тата Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем Канашпа Орнар хушшинчи ҫул ҫинче шыв трубисем хывман. «Ҫамрӑк колхозник» ялхуҫалӑх артелӗн иртнӗ ҫултах кӗпер тумалла пулнӑ. Кӗперне тунӑ, анчах хӑмисене пӑтасемпе ҫапса ҫирӗплетмен.

Калас пулать, райсовет исполкомӗ ҫулйӗр ӗҫӗсемпе сахал интересленет, колхозсене плансем ҫитерсе панӑ та вӗсем пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине тӗрӗслесе тӑма мансах кайнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ район ҫулйӗрсене юсас планӑн ҫӗррине те тултарман.

С. ШАДИН.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Многие хозяйственные организации республики, несмотря на решение Совнаркома Чувашской АССР от 21 июля 1941 г. за № 1248, до сего времени не обращают достаточного внимания на сбор и сдачу старой авторезины Росснабсбыту для вулканизации. Всем организациям необходимо всю имеющуюся старую авторезину в трехдневный срок сдать Росснабсбыту.

Росснабсбыт доводит до сведения, что вулканизированная авторезина и автопокрышки будут выдаваться только тем организациям, которые сдадут старую авторезину.

Чувашское Отделение «РОССНАБСБЫТ».

Требуется на постоянную работу главный бухгалтер и на временную работу секретарь-машинистка.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Ленинградская, дом 16, Чувашрыбтрест.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ

Мерин саврасовой масти, на носу белое пятно, 18 лет.
Задержавших просим сообщить по адресу: Цивильский район, д. Степно-Тугаево, колхозу „Пучах".

ТРЕБУЮТСЯ инспектора Сельхозбанка по Вурнарскому, Канашскому и Порецкому районам. Заявления подавать в контору Сельхозбанка в гор. Чебоксарах или в соответствующие отделения Госбанка.
2—2.

Чебоксарскому Леспромхозу

требуются шофера и автомеханик. Квартирой и столовой обеспечиваются. Обращаться по адресу: ул. Горького, дом № 23. Тел. 4-58.

Областному отделу Союзпечати

требуются два бухгалтера и два экспедитора. Обращаться в Дом связи, 3-й этаж, комната № 11.

УТЕРЯННУЮ КРУГЛУЮ ПЕЧАТЬ

колхоза «Красное Знамя» Икковского сельсовета Чебоксарского района Чувашской АССР считать недействительной.

Правление.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 519 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. л.